# ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИН АНТОЛОГИЙĔ

## ПОЭЗИ

## И.Я. ЯКОВЛЕВ

Кăнна Кушки... Ăна туран куратăн:
Çырмаллă ял; ял вĕçĕнче çаран.
Тахçан кунта иккен тăлăх-туратăн
Кĕтӳ кĕтсе вăл ӳснĕ ачаран.

Ун чух чăвашăн пурнăçĕ, кун-çулĕ
Хăй пӳрчĕсем пек пулнă-çке хура.
Юхтарнă халăх тарпала куççулĕ,
Пуççапнă ĕмĕр Пихампар турра.

Ун ăслă юррипе юмах-халапĕ
Усраннă теççĕ хăвăл ăшĕнче;
Шуйттан çырми те Пыллăх,
Кашкăр лапĕ
Итленĕ вĕсене сĕм каçсенче.

Ĕмĕтленни-çунни те иртнĕ кăлăх,
Çырса хумашкăн сас палли те çук...
Çакна йăлтах курса ăнланнă тăлăх
Çĕрсем-хирсем виçсе çӳренĕ чух.

Вăл çитĕ тенĕ яланах мăнтарăн
Ятне илтсе тăма саманара,
Ак Чĕмпĕр çулĕпе тусан тустарнă
Ун çăпаталлă ачисем вара.

Патша саманинче вăл тем те тӳснĕ,
Нумай вăл курнă хурапа шурра.

Вăл лартнă çимĕç тертлĕн шăтса ӳснĕ,
Пур халăхпа çĕр асапне кура.

Сĕм чăтлăх витĕр çĕнтерсе тухасшăн
Вăл парăнмасăр утнă çутталла.
Ăна хавхалантарнă Ленин ашшĕ —
Ĕмĕтсемпе, ăспа, кăмăлпала.

...Ту айĕнче ларать мухтавлă Кушкă.
Кăнна юхса выртать ял çумĕпе.
Чечен касра, куратăп, ушкăн-ушкăн
Ача-пăча шкула чупать ирпе.

Вăл уçнă шкул. Пĕр Кушкăра çеç мар вăл.
Атăлпала Сĕве тăрăхĕнче
Кашни ялтах вăл ырă ят хăварнă,
Кашни çынах пĕлет халь ун çинчен.

Çĕршыв çине çурхи хĕвел пăхсассăн
Эпир кунта-çке çĕнĕ тивлетпе,
Çут кун-çула çул тытрăмăр хавассăн,
Кăнна та Атăла çул тытнă пек.

Çуралнă ялăма килсе кĕрсессĕн
Пире ăс панă шкулăн умĕнчен
Эп Яковлев ятне аса илмесĕр,
Сума сумасăр, нихăçан иртмен.

Вăй илтĕмĕр çĕнĕ тĕнче тумалăх,
Çитетпĕр çӳллĕ ĕмĕтсем патне.
Çапах нихçан, нихçан та манмĕ халăх
Хăйне букварь тыттарнă çын ятне.

## ПАЛĂК

Эп куратăп авалхи пĕр палăк,
Пушкин юррине кĕнĕ фонтан.
Ăна лартнă ĕмĕр асăнмалăх
Тыткăнри хĕр ячĕпе пĕр хан.

Кĕлетки ун çын сăн-пичĕ евĕр,
Шыв тумла тăрать ун куçĕнче:
Вĕçĕмсĕр куççуль тăкать ку тейĕр;
Вăл чăнах çав шухăшлă иккен.

Ун çине пăхатăн та туятăн:
Юрату — чун савăнăçĕ мар,
Юрату — кăшт хурлансах
калатăн —
Чĕрене çунтаракан кăвар.

Савнă тусăн ячĕпе пĕр палăк
Манăн та лартасчĕ пурнăçра;
Лартаясчĕ ĕмĕр асăнмалăх
Чи илемлĕ юрă-сăвăран.

Шухăшĕ ун пултăрччĕ çунатлă
Чун савни патне вĕссе кайма,
Чăн сăмахĕ — çепĕç те хăватлă
Сарă хĕрĕн кăмăлне уçма.

Çамрăк ĕмĕрех ăна вулатăр,
Туйтăр: юрату — вăл хурлăх мар;
Юрату вăл — савăнсах калатăр —
Чуна ырлăх паракан кăвар.

# ШУПАШКАР ÇĂКИСЕМ

Шупашкар çăкисем, Шупашкар çăкисем —
Хамăр çамрăк чухне юратса лартнисем!
Йăрăс пӳллĕ эсир, ӳснĕ çӳллĕ эсир:
Ытараймăн пăхса халь сире каç та ир.

Ешĕл тумлă çыран, симĕс пурçăн çаран
Атăлпа пынă чух курăнать аякран;
Курăнаççĕ çуртсем, тăвалла урамсем —
Ку вăл пирĕн хула, асăмри тусăмсем!

Пăрахут кăшкăртать, вăрмана ян ярать,
Ăна хирĕç сăртран пăравус сас парать.
Ĕçлеме заводсем, вĕренме шкулĕсем,
Усăлма сачĕсем, юратма хĕрĕсем...

Атăла пĕвесен, йăлăма шыв илсен,
Сарлака кукăрсем хумсемпе чӳхенсен,
Тусăм, кил хăнана, пĕрле тинĕс курма,
Урамран урама ишсе каç юрлама.

Ай, тăван Шупашкар! Эс тинех чухăн мар,
Сан ятна мухтаса усçăн юрă юрлар.
Савăнса итлĕрсем, пирĕн çывăх туссем.
Шупашкар çăкисем, Шупашкар çăкисем!